2017-2018 - мĕш вĕренӳ çулĕнче
шкул шайĕнчи 6 - мĕш класра чăваш чĕлхипе тата литературипе
ирттермелли олимпиада ыйтăвĕсем

Ирттерме палăртнă вăхăт - 60 минут
Чи нумай балл – 35

1. Антонимсенчен пулнă 6 мăшăр сăмах тупса çырăр. *(Кашни тĕрĕс хуравшăн 1 балл. Пурĕ - 3 балл)*

2. Чăваш чĕлхинче миçе диалект? Чăваш литература чĕлхи мĕнле диалект çинче никĕсленнĕ? (*Кашни тĕрĕс хуравшăн 1 балл. Пурĕ - 2 балл)*

3. Ыйтăвĕсене кура панă сăмахсене икĕ ушкăна уйăрса çырăр.
Сантăр, анне, тинĕс, пилеш, упа, тухтăр, чĕкеç, инке, арăслан, И.Я.Яковлев
(Кашни тĕрĕс хуравшăн 0,5 балл. Пурĕ - 5 балл)

4. Йывăç ячĕсене чăвашла куçарăр. *(Кашни тĕрĕс хуравшăн 0,5 балл. Пурĕ - 5 балл)*
Дуб, берёза, липа, осина, тополь, клён, ель, сосна, рябина, черёмуха.

5. Камран? Мĕнрен? ыйтусем хăш падежăн? *(2 балл)*

6. Йăнăш тупăр та тӳрлетĕр. *(3 балл)*
Унтри хăйĕн куккана аякранах курчĕ те савăнăçлăн алă сулчĕ

7. Сăвă çавринче йĕркесем пĕр пек янăраса вĕçленнине мĕн теççĕ?*(2 балл)*
Вĕсем миçе тĕрлĕ пулаççĕ? *(Кашни тĕрĕс хуравшăн 1 балл. Пурĕ - 5 балл)*

8.Çак йĕркесене хăш хайлавран илнĕ. *(2,5 балл)* Хайлав авторĕ? *(2,5 балл)*
(Пурĕ - 5 балл)
«…Ах, шухăшăм, шухăшăм!
Мĕншĕн эсĕ çăврăнан?
Сарă хитре хĕрĕшĕн
Мĕншĕн ăша çунтаран?...»
9. П.Г.Кипарисов «Юрă» картининче пĕр паллă чăваш поэтне сăнланă. Кам вăл? *(3балл)*

10. «Мускав кушакне чапа кăлартăм» хайлаври кушак ячĕ. *(2 балл)*